ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТЕРРИТОРИЙЕНЧЕ ГРАЖДАНСЕНЕ ШĂПЛĂХПА ТАТА КАНЛЕХПЕ ТИВЕÇТЕРЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2023 çулхи чӗк уйăхĕн 30-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья. **Çак Саккун право тĕлĕшĕнчен йĕркелесе тăракан ыйтусем**

1. Çак Саккун Чăваш Республикин территорийĕнче граждансене шăплăхпа тата канлĕхпе тивĕçтерес енĕпе çыхăннă хутшăнусене йĕркелесе тăрать.

2. Çак Саккунăн положенийĕсем граждансем, должноçри тата юридически сăпатсем пурнăçлакан çак ĕçсемпе çыхăннă ĕçсене пырса тивмеççĕ:

1) правăна пăснисене чарса лартассипе тата сирсе ярассипе, аварие, хăй тĕллĕн пулакан инкексене, чрезвычайлă ытти лару-тăрăва сирессипе тата ун сиенне пĕтерессипе, граждансен хăрушсăрлăхне тивĕçтернипе е халăхăн пурнăç условийĕсене тивĕçтерекен объекчĕсем ĕçленипе çыхăннă пĕр тăхтамасăр пурнăçламалли ĕçсене тăвассипе;

2) тĕн йăли-йĕркисене тата церемонийĕсене ирттернĕ чухне, çавăн пекех патшалăх влаçĕн органĕсен е вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен йышăнăвĕ тăрăх е тата вĕсемпе килĕштернĕ тăрăх ирттерекен культурăпа массăллă мероприятисем, спорт тата массăллă ытти мероприятисем ирттернĕ чухне тăвакан ĕçсемпе;

3) Раҫҫей Федерацийӗн Административлӑ правӑна пӑснисем ҫинчен калакан кодексӗпе правӑна пӑснӑшӑн административлӑ яваплӑх пӑхса хӑварнӑ ӗҫсемпе;

4) Ҫӗнӗ ҫул уявне раштав уйӑхӗн 31-мӗшӗнче 22 сехетрен пуҫласа кӑрлач уйӑхӗн 1-мӗшӗнчи 4 сехетчен ирттерессипе.

2 статья. **Граждансен шӑплӑхне тата канлӗхне тивӗҫтермелли требованисене пырса тивекен вӑхӑт тапхӑрӗсем**

Граждансен шӑплӑхне тата канлӗхне тивӗҫтермелли ҫак Саккунпа палӑртнӑ требованисем ҫак вӑхӑт тапхӑрӗсене пырса тивеҫҫӗ:

1) тунтикунран пуҫласа эрнекунччен (эрнекуна кӗртсе) 23 сехетрен пуҫласа 7 сехетчен, нумай хваттерлӗ ҫуртсенчи граждансен шӑплӑхне тата канлӗхне пӑсакан строительствӑпа монтаж, строительствӑпа юсав ӗҫӗсем тӗлӗшпе вара – 20 сехетрен пуҫласа 8 сехетчен;

2) шӑматкун, вырсарникун тата Раҫҫей Федерацийӗн саккунӗсемпе палӑртнӑ ӗҫлемелле мар уяв кунӗсенче 22 сехетрен пуҫласа 9 сехетчен, нумай хваттерлӗ ҫуртсенчи граждансен шӑплӑхне тата канлӗхне пӑсакан строительствӑпа монтаж, строительствӑпа юсав ӗҫӗсем тӗлӗшпе вара – 19 сехетрен пуҫласа 9 сехетчен;

3) 13 сехетрен пуҫласа 15 сехетчен кашни кун нумай хваттерлӗ ҫуртсенчи граждансен шӑплӑхне тата канлӗхне пӑсакан строительствӑпа монтаж, строительствӑпа юсав ӗҫӗсем тӗлӗшпе, ҫав ӗҫсене нумай хваттерлӗ ҫурта хута янӑ кунран пуҫласа 24 уйӑх хушшинче пурнӑҫлакан тӗслӗхсем-сӗр пуҫне;

4) ҫак Саккунӑн 4 статйин 4–6-мӗш пункчӗсемпе пӑхса хӑварнӑ ӗҫсем (ӗҫсем туманни) тӗлӗшпе талӑкӗпе.

3 статья. **Граждансен шӑплӑхне тата канлӗхне тивӗҫтермелли объектсем**

Граждансен шӑплӑхне тата канлӗхне тивӗҫтермелли объектсен шутне ҫаксем кӗреҫҫӗ:

1) нумай хваттерлӗ ҫуртсенчи пурӑнмалли пӳлӗмсем тата пурте усӑ кураканпӳлӗмсем, блок мелӗпе лартакан пурӑнмалли ҫуртсем, общежитисем;

2) нумай хваттерлӗ ҫуртсен тата харпӑр хӑй валли тунӑ ҫурт-йӗрсен ҫурт ҫумӗнчи территорисем, автомобиль транспорчӗн стоянкисем, пурӑнмалли зонӑсенче (вӗсене Раҫҫей Федерацийӗн Хула строительствин кодексӗнче палӑртса хӑварнӑ) вырнаҫнӑ ача-пӑча тата спорт площадкисем;

3) медицина, вĕренӳ организацийĕсен тата социаллă, реабилитаци пулăшăвне парас тата сывлăха çирĕплетес ыйтусене тивĕçтерекен, вăхăтлăха куçса килнĕ гражданссене вăхăтлăха вырнаçтарас тата (е) тивĕçтерес енĕпе ĕçсем тăвакан ытти организацисен объекчĕсем (территорийĕсем);

4) гражданссем харпăр хăй валли сад ĕрчетекен тата пахча çимĕç туса илекен территорисем.

4 статья. **Граждансен шăплăхне тата канлĕхне тивĕçтермелли требованисем**

Чăваш Республикин территорийĕнче çак Саккунăн 2 статйинче палăртнă вăхăт тапхăрĕсенче çак Саккунăн 3 статйинче кăтартнă объектсенчи граждансен шăплăхне тата канлĕхне пăсасси патне илсе çитерекен ĕçсем (ĕçсем туманни) тума юрамасть, вĕсем çакнашкал ĕçсенче палăраççĕ:

1) хытă кăшкăрашнинче, тăпăртатнинче, шăхăрнинче, юрланинче, музыка инструменчĕсемпе усă курнинче, шакканинче, сĕтел-пукана куçарнинче;

2) граждансен шăплăхне тата канлĕхне пăсасси патне илсе çитерекен строительствăпа монтаж, строительствăпа юсав, тиевпе пушатмалли ĕçсем туса ирттернинче;

3) сасă кăларакан тата сасă вăйлатакан хатĕрсене (радиоприемниксене, магнитофонсене, телевизорсене тата ыттисене), çав шутра транспорт хатĕрĕсем, балконсем тата чӳречe янаххисем çине вырнаçтарнисене, вăйлă сасă кăларттарса усă курнинче;

4) транспорт хатĕрне харпăрлăхра тытакан (хуçа) транспорт хатĕрĕн ĕçлесе кайнă хурал сигнализацине сӳнтерес енĕпе мерăсем йышăнманнинче;

5) Раççей Федерацийĕн çул-йĕр хăрушсăрлăхĕ çинчен калакан нормативлă право акчĕсемпе пăхса хăварман тĕслĕхсенче транспорт хатĕрĕн сасă сигналĕсемпе усă курнинче;

6) нумай хваттерлĕ çуртăн пурăнмалли е пурăнмалли мар пӳлĕмĕнче килти чĕр чун хуçи килти чĕр чуна вĕрме, улама тата килти чĕр чун кăларакан ытти шăв-шава чарас енĕпе мерăсем йышăнманнинче;

7) пиротехника хатĕрĕсемпе усă курнинче.

5 статья. **Граждансен шăплăхне тата канлĕхне пăснăшăн тытакан яваплăх**

Граждансем, должноçри çынсем, юридически сăпатсем граждансен шăплăхне тата канлĕхне пăсакан, çак Саккунпа пăхса хăварнă ĕçсене (ĕçсем

туманнине) тусан вёсене Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче административлă правăна пăснисем çинчен" 2003 çулхи утă уйăхĕн 23-мĕшĕнчи 22 №-лĕ саккунĕпе килĕшӳллĕн административлă майпа явап тыттараççĕ.

6 статья. **Çак Саккун вăя кĕресси**

Çак Саккун 2024 çулхи пуш уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕрет те 2030 çулхи нарăс уйăхĕн 28-мĕшĕччен (кĕртсе) вăйра тăрать.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хули
2023 çулхи чӳк уйăхĕн 30-мĕшĕ
91 №